**Пирĕн ентешсем – çар службинче**

# Контрактник отпускра пулчĕ

***Нумаях пулмасть Чуманкасси ялĕнче пурăнакан тата контрактпа çар службинче тăракан Юрий Александрович Замятин отпускра тăван ялĕнче пулчĕ. Хăйĕн служба тивĕçне вăл Севастопольти флагман шутланакан «Москва» гварди ракета крейсерĕ çинче пурнăçлать. Эпĕ унпа тĕл пулнă май хăйĕн служби пирки тĕплĕнрех каласа пама ыйтрăм.***



**– Эсĕ ĕнтĕ иккĕмĕш çул хăвăн салтак тивĕçĕсене пурнăçлатăн. Мĕнлерех туйăнать сана салтак пурнăçĕ?**

– Çапла, мана 2006 çулхи ноябрĕн 20-мĕшĕнче призывпа салтака илчĕç. Тепĕр 4 кунтан Севастополе лекрĕм. 2007 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче хамăн служба тивĕçне «Москва» гварди ракета крейсерĕ çинче пурнăçлама тытăнтăм.

Пĕр уйăх хушшинче çамрăксем килсе тăчĕç. Хамăр тивĕççене алла илсе зачетсем тытрăмăр. Çавна каласа хăварасшăн. Зачетсене чи пĕрремĕшсем шучĕпе пама пултартăм, «Значок отличия» илтĕм.

Тĕрĕссипе салтак пурнăçĕ мана килĕшет. Пĕр суймасăр калас пулсан вара шкул çулĕсенчех салтак пурнăçне хăнăхма тытăнни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Физкультурăпа, спортпа ытларах туслă пулмалла. Кун пек чухне салтак пурнăçне хăнăхма та çăмăлрах.

**– Хăвăн пирки ку тĕлĕшпе вара мĕн калама пултаратăн?**

– Чи малтанах çавна асăннă пулăттăм. Çара кайиччен районти çар комиссариачĕ урлă хăвна килĕшекен пĕр-пĕр çар специальноçне алла илни ытлашши пулмасть. Ку вăл пĕтĕмĕпех тӳлевсĕр. Çитменнине илнĕ професси çар ретĕнчен таврăнсан та ытлашши пулас çук. Эпĕ вара çара кайиччен çар комиссариачĕ урлă связиста вĕренсе тухрăм. Халĕ вара «Москва» крейсер çинче те хамăн салтак тивĕçне çак специальноçпех пурнăçлатăп. Кун пек чухне çĕнĕ тивĕççене хăнăхма çăмăлрах.

Спортпа туслă пулмалли пирки уйрăммăн палăртнă пулăттăм. Шкулта вĕреннĕ чухнех эпĕ тĕрлĕ ăмăртусене сахал мар хутшăннă. Халĕ вара çакăн усси куçкĕрет. Спортпа туслă пулсан салтак пурнăçне те çăмăлрах хăнăхатăн.

**– Тинĕсе пĕрремĕш хут тухни пирки те ыйтса пĕлес килет.**

– Ку вăл 2007 çулхи февраль уйăхĕн вĕçĕнче пулчĕ. Чăннипех те çакă вăл асран тухми самант. Атăл юхан шывĕнчен ытлашши курман чăваш ачишĕн Хура тинĕс анлăшне пăхса савăнма епле илĕртӳллĕ. Ун чухне эпир патруль тивĕçĕсене пурнăçларăмăр, карапсем хушшинчи çыхăнăва йĕркелесе пытăмăр. Кайран вара тинĕсе тухнисем пĕрре кăна мар пулнă.

2008 çулхи январĕн 12-мĕшĕнче Атлантика океанне пĕрремĕш çар службине тухрăмăр. Унта Çурçĕр флочĕн карапĕсемпе пĕрле пĕрлехи вĕрентӳсем пулса иртрĕç. Ун хыççăн пирĕн крейсер çинче Португали, Франци, Итали çĕр-шывĕсен представителĕсем пулса курчĕç.

**– Контрактпа çар службине тăсасси пирки епле майпа йышăну турăн-ха эсĕ?**

– Ирĕксĕрленипе мар, хамăн ирĕкпех. Чăннипе каласан мана карап çинчи çар служби килĕшет. Çавăнпах ĕнтĕ 2007 çулхи августăн 11-мĕшĕнче эпĕ 3 çуллăха контрактпа çар службинче пуласси пирки алă пусса патăм.

**– Нумаях пулмасть Грузипе Кăнтăр Осети хушшинче çар хирĕçĕвĕ пулни пирки пурте пĕлетпĕр. Унта пирĕн çĕр-шыв, вăл шутра эсĕ служба тăракан крейсер та хутшăнчĕ. Ун пирки мĕн каланă пулăттăн?**

– Августăн 4-мĕшĕнче ытти карапсемпе пĕрле патруль тивĕçĕсене пурнăçлама тинĕсе тухрăмăр. Карапсем хушшинчи çыхăнăва йĕркелесе пырассишĕн эпир ответлă пулса. Хамăр тивĕçе япăх пурнăçламарăмăр. Çыхăну управленийĕ тĕлĕшпе япăх калани пулман. Çав тапхăрта Новороссийск, Сухуми хулисем, Грузи патĕнче çар тивĕçне пурнăçларăмăр. Сентябрĕн 11-мĕшĕнче вара хамăрăн базăна Севастополе каялла кĕтĕмĕр. Сухуми патĕнче пулнă чухне вара хамăрăн крейсер çинче Абхази Президентне кĕтсе илтĕмĕр.

**– Санăн çар званийĕ мĕнле-ха халĕ?**

– Асăнтăм ĕнтĕ, çара кайиччен районти çар комиссариачĕ урлă вĕренсе радиотелеграфист профессине алла илтĕм. Кайран Севастопольте старшинасен шкулĕнче вĕрентĕм. Халĕ вара эпĕ иккĕмĕш статья гварди старшини званийĕпе служба тивĕçĕсене пурнăçлатăп. Кунпа пĕрлех радиотелеграфистсен уйрăмĕн командирĕ.

**– Çавна та ыйтса пĕлнĕ пулăттăм. «Москва» гварди ракета крейсерĕ Хура тинĕс флотĕнче флагман шутланать. Ку крейсер пирки тĕплĕнрех мĕн каласа пама пултаратăн?**

– Экипажра 510 çын. Крейсерăн тăршшĕ 186,5 метр, сарлакăшĕ 20,8 метр. Хăвăртлăх шайĕ 32 узелпа танлашать. 15 узелпа 6000 миль инçĕшне ишме пултарать. Çар техники шутĕнче «Базальт» комплексĕн 16 пуск установки (П-500 маркăллă 16 ракета), С-300Ф «Риф» зенитпа ракета комплексĕн Б-204 8х8 пуск установки (çар комплектĕнче 5В55 маркăллă 64 зенит ракети), «Оса-МА» зенитпа ракета комплексĕн 2х2 ЗИФ-122 установки (çар комплектĕнче 9М33 маркăллă 48 зенит ракети), 1х2 130 миллиметрлă АК-130 артустановка (çар комплектĕнче 2000 хут пемелĕх), 6 кĕпçеллĕ 30 миллиметрлă АК-630 маркăллă 6 артустановка (çар комплектĕнче 16000 хут пемелĕх), 2х5 533 миллиметрлă торпедо аппарачĕсем, 2х12 бомба пăрахакан РБУ-6000 реактивлă установкăсем, кимĕсемпе кĕрешмелли Ка-27 вертолет.

**– Карап-крейсер историне те пĕлес килет.**

– «Слава» ятлă пулнă ун чухнехи крейсера 1979 çулта хута янă, экипажпа тивĕçтернĕ хыççăн вăл 1982 çул вĕçĕнче Хĕрлĕ ялавлă Хура тинĕс флотĕнче строя тăнă. 1990 çулччен Хура тинĕс флочĕн тĕп ударлă вăйĕ шутланнă. 1989 çулта «Слава» ракета крейсерĕ Мальта утравĕ çинче СССР Генеральнăй секретарĕпе Михаил Горбачевпа США Президенчĕн Джордж Бушăн тĕл пулăвне тивĕçтерес ĕçе хутшăннă.

1990 çулта «Слава» крейсера çĕнетсе юсав ĕçĕсем пурнăçлама Николаев заводне лартнă. Планпа пăхнă 8 уйăх 8 çул çурăна тăсăлнă. Сăлтавĕ пĕрре – укçа-тенкĕ çитменни. 1995 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче крейсера Тинĕс-çар флочĕн командующийĕн приказĕпе «Москва» ят панă. 1997 çулхи июнĕн 12-мĕшĕнче ун çинче Андреевски ялав çĕкленĕ. 2000 çулхи апрельте, 10 çул хушшинче пĕрремĕш хут, «Москва» тинĕсе тухнă. 2002 çултан тытăнса вăл çар службинче шутланать, 2003 çулта Хура тинĕс флочĕн ытти карапĕсемпе, Лăпкă океан флочĕн тата Индин Тинĕс çар флочĕн вăйĕсемпе пĕрлехи ученисене хутшăннă.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**çырса илнĕ.**

**Хисепе тивĕçлĕ ĕçченсем**

# Пултаруллисенчен пĕри пулнă

Пирĕн районта пархатарлă та ĕçчен, канлĕхе çухатнă хастар çынсем сахал мар. Умри йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса вĕсем ыттисем хушшинче ырă ят çĕнсе илме пултарнă. Вĕсенчен пĕри пулса тăрать те ĕнтĕ районти Чамăш ялĕнче 1940 çулта çуралнă Раиса Гавриловна Филиппова.

Унăн кун-çулĕ те питĕ интереслĕ. Ашшĕ 1941 çулта йывăр чирлесе вилет. Амăшĕн вара, Наталья Семеновнан, виçĕ ачине (Натали, Раиса, Иван) пĕччен пăхса çитĕнтерсе ура çине тăратма тивет.

Раиса Гавриловна Оринин шкулĕнчен 7 класс вĕренсе тухнă. Амăшĕпе пĕрле колхоз ĕçне хутшăннă. Çур аки умĕн алăпа вăрлăх суйланă, акнă тырри шăтса тухсан алăпах çум курăксенчен тасатнă, вырма пуçлансан тырă вырнă, авăн çапнă, кĕлте тунă.

1960 çулта 20 çулхи Раиса фермăна ĕçлеме кĕнĕ. Малтанхи 6 çулне пăрусем пăхнă çĕрте вăй хунă. Кайран вара сысна фермине куçса мĕн пенсие тухиччченех тăрăшнă.

Çирĕм çула çитсен çак чипер те ĕçчен, мал ĕмĕтлĕ хĕре çак ял каччиех Виссарион Павлович Филиппов куç хывнă, кайран вĕсем пĕрлешсе çемье çавăрнă.

Çемьере виçĕ ача хушăнать: Володя, Василиса, Алина. Ĕçчен хăрарăм пуçне усман, вĕçĕмех колхоз ферминче тăрăшнă. Ачасем пĕчĕк тесе вĕсем хыçне пытанман, вĕсене ура çине тăратас тесе тимленĕ.

Юратнă ĕçĕпе хăй хыççăн ырă йĕр хăваракан ĕçчене коллективра та, ял-йышра та, хуçалăх правленийĕпе çӳлтерехри пуçлăхсем те асăрхамасăр тăма пултарайман. Икĕ хутчен ăна район шайĕнчи, тепĕр икĕ хут ял Совечĕн шайĕнчи депутат пулма суйланă. Çавăн пекех Ĕçлĕх Хĕрлĕ ялав орденне, Чăваш Республикин Аслă Канашĕн, ытти тĕрлĕ Хисеп грамотисене илме тивĕç пулнă. Районти Хисеп хăми çине те ăна пĕр хут кăна мар кĕртнĕ. «Ĕç ветеранĕ» ята та ахальтен тивĕçмен ĕнтĕ вăл.

Раиса Гавриловна 55 çул тултарсан та тивĕçлĕ канăва кайма васкаман, татах тепĕр 3 çул ĕçленĕ. Фермăра ĕçлени вара пĕтĕмпе 38 çулпа танлашать.

Малалла унăн ĕçне фермăра Маргарита Витальевна Филиппова тăсать. Вăл унăн кинĕ – ывăлĕн мăшăрĕ пулать. Каярахпа ывăлĕ Владимир та фермăра слесарьте ĕçлеме килĕшет. Унччен вăл колхозра тракторист пулса тăрăшнă.

Раиса Гавриловна Филиппова халĕ тивĕçлĕ канура. Мăшăрĕпе пĕрле ывăлĕн çемйипе пурăнать. 3 ачин 9 мăнукĕ – вĕсен кĕтнĕ хăнисем. Мăнукĕсене ваттисене хисеплеме, тăрăшуллă пулма вĕрентет.

Мăнукĕсем те асламăшĕнчен тĕслĕх илме тăрăшаççĕ. Сăмахран, Людмила мăнукĕ хулара Олимп резервĕсен училищинче пĕлӳ пухать. Тĕрлĕрен ăмăртусене хутшăнса вăл медальсемпе дипломсем, парнесем сахал мар çĕнсе илме пултарнă. Унăн тренерĕ В.Н. Краснов та ырă сăмахсене тивĕç.

Филипповсен çемье династийĕ пирĕн пурнăç аталанăвне пысăк тӳпе хывни куçкĕрет. Ăшă сăмаха тата тимлĕхе тивĕç вĕсем. Пысăк тав сăмахĕ кăна суннă пулăттăм вĕсене малашнехи пурнăçра.

**И. СКВОРЦОВА.**

Чамăш ялĕ.

**Культура хыпарĕсем**

# Ылтăн кĕркунне

Кĕр кунĕсем çитнĕ май Культура çурчĕсенче хĕрӳ ĕçсем пуçланчĕç. Акă Москакассинчи Культура çуртĕнче ĕçлекенсем те çак ĕçрен аякра юлас темерĕç.

Ватă çынсене хисеп туса октябрĕн 1-мĕшĕнче чаплă уяв туса пачĕç. Çак кунсенче вара «Çамрăк çемье» клуб (ертсе пыраканĕ Н.А. Миронова) кĕрекене çамрăк çемьесене пуçтарчĕ. Питех те ăшă кăмăллă иртрĕ çак тĕл пулу. Натальяпа Станислав Парандеевсем вара хăйсен 1-мĕш пепкипе килме кăмăл турĕç. Çемьесемпе малтанах Наталья Миронова психолог çемье темипе çыхăнтарса тренинг ирттерчĕ. Çакă вара пуриншĕн те усăллă пулчĕ.

Кайран вара çак уява килнисене «Шуçăм» халăх ушкăнĕ илемлĕ концерт лартса пачĕ. Юлашкинчен чей ĕçнĕ хушăра Шупашкар хулинчен ятарласа килнĕ тухтăр Е.Н. Малышева терапевт тата шăл тухтăрĕ Т.Н. Николаева пылтан тунă препаратсемпе мĕнле сипленмелли çинчен тĕплĕн каласа пачĕç. Çакăн пек иртternĕ тĕл пулу пурин кăмăлне те кайрĕ.

Тепĕр кунне вара Культура çуртне Кĕрхи уява йыхравларĕç. Асăннă вăхăта çамрăксем чылайăн пухăнчĕç. Ташă ушкăнĕ уява илемлĕ ташăпа уçрĕ. Уяв каçне вара Алина Волкова ăста ертсе пычĕ.

Хĕрсем хушшинче конкурс иртрĕ. Чи пултарулли Таня Андреева пулса тăчĕ. Вăл «Ылтăн кĕркунне» конкурсăн çĕнтерӳçин ятне тивĕçрĕ. Лотерея вылявĕ те пулчĕ. Çамрăксем вара ташă ушкăнне (ертӳçи Ирина Петрова) сцена çине тухмассерен тăвăллăн алă çупса йышăнчĕç. Çапла вара Культура çурчĕ хăйĕн ĕçне çакăн пек уявсемпе пуçларĕ.

**Г. ГОЛУБЕВА,**
**Культура çурчĕн директорĕ.**

***Саламлатпăр***



Юратнă тата хаклăран та хаклă мăшăра, аннене, кукамая – Муркаш ялĕнче пурăнакан **Валентина Ефимовна БОРИСОВАНА** ноябрь уйăхĕн 9-мĕшĕнче сумлă юбилей ячĕпе чĕререн саламлатпăр. Пирĕн юратнă çыннăмăр Канашри педагогика училищинчен вĕренсе тухнă хыççăн 45 çул ытла тĕрлĕ çĕрти ача-пăча сачĕсенче, вăл шутра «Солнышко» ясли-садра 33 çул ытла воспитатель пулса тăрăшнă, ĕç ветеранĕн хисеплĕ ятне, нумай Хисеп грамотисене тивĕçнĕ. Юбилей ячĕпе саламласа сана мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Вăрăм кун-çул, тулли телей, çирĕп сывлăх пулччăр, çирĕп сывлăхпа татах та нумай çул мăшăрупа, ачусемпе, мăнукусемпе тата тăванусемпе савăнса пурăнмалла пултăр.

Вăрăм ĕмĕр пултăр санăн пурнăçра,
Савнă мăшăр куллен çиçтĕр сан çумра,
Ачусем хисеплĕн пăхчăр сан çине,
Мăнукусем ялан пулччăр санăн çумăнта.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе хĕрĕ, кинĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем тата юлташĕсем.**

---

Юратнă мăшăра, аттене, кукаçие – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Юрий Арсеньевич ЗАХАРОВА** 60 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр, мĕр пур ыррине тата вăрăм кун-çул, иксĕлми телей, çирĕп сывлăх сунатпăр. Эс пурришĕн савăнатпăр, санпа хамăра телейлĕ туятпăр. Тайма пуç сана пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, кинĕ, виçĕ мăнукĕ тата çывăх тăванĕсем.**

---



Поздравляем с 80-летним юбилеем любимого мужа, отца, деда, прадеда **Михаила Егоровича ИВАНОВА**, проживающего в с. Б. Сундырь.

Сегодня праздник всей семьи – твой юбилей!
И мы желаем тебе милый – не болей.
Такие даты празднуют не часто.
Но раз пришла встречать ее пора,
Желаем мы на будущее счастья,
А с ним здоровья, бодрости, добра.

**С поздравлением жена, 6 дочерей, зятья, 10 внуков, 5 правнуков, родственники.**

---



Юратнă, хаклă тăхлачăна, аннене, асаннене – Иштерек ялĕнче пурăнакан **Раиса Ивановна КАЛИНИНАНА** ноябрĕн 7-мĕшĕнче 64 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Канлĕ ватлăх, ырлăх-сывлăх, нумай-нумай çул ывăлусемпе кинӳсене, мăнукусене савăнтарса пурăн.

Пирĕн тăхлачă 18 çултанпах тракторпа ĕçлет. Малтан «Правда» колхозра вăй хунă, кайран «Дружба» колхозра канăва тухсан та 6 çул тăрăшнă. Раиса Ивановна республикăри ака-суха ăмăртăвĕсенче яланах малти вырăнсенче пулнă, президентăн парнине те илме тивĕç пулнă. Паша Ангелина призне те çĕнсе илнĕ. Орденпа, нумай медальсемпе наградăланă ăна. Пирĕн тăхлачă халĕ те алă усса лармасть, канăва тухни 14 çул çитнĕ пулсан та хăйĕн юратнă тракторне пăрахаймасть. Çуркуннерен пуçласа мĕн кĕрчченех ял халăхне ака-суха тума, утă-улăм пуçтарса кĕртме пулăшать. Пирĕн тăхлачă чăннипех тивĕçлĕ çак сăмахсене.

**Саламлаканĕсем: хăтипе тăхлачи, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, Грачевсен, Квасовсен, Пудовсен çемйисем, тăванĕсем, пускилсем.**

---



Çатракасси ял тăрăхне кĕрекен Кашмаш ялĕнче çуралса ӳснĕ тата кунтах çемье çавăрса ĕç ĕмĕрне «Свобода» хуçалăхра ирттернĕ, тава тивĕçлĕ ĕçпе ялта ырă ятлă **Анастасия Порфирьевна ЛЮБИМОВА** ыран 80 çул тултарать. Пирĕн юратнă аннемĕр, хуняма, кукамипе асанне тата хисеплĕ тăхлачăпа ырă кăмăллă çывăх тăванăмăр хăй ĕмĕрĕнче мĕн курни пире тĕлĕнтерет кăна, вăл чăтса ирттернĕ йывăрлăхсем пире пурнăçра тăрăшуллăрах та чăтăмлăрах пулма, ĕçе юратма, пурнăç илемне туллин курса пурăнма вĕрентеççĕ. Пурнăçра кирек темĕнле пулсан та вăл хăйĕн ятне яман, ачисене те тĕрĕс воспитани панă. Паян унăн вĕрентĕвĕсем-мăнукĕсем тĕлĕшпе. Эпир сана пĕрле пулса татах нумай çул таса сывă пурăнма ырлăх-сывлăх, канлĕ ватлăх, телей те ăнăçу сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, 6 мăнукĕ, çывăх тăванĕсем, хăти-тăхлачисем.**